# ЮЛИАН ТУВИМ

*Польша Халăх Республики*

## EX ORIENTE!
### (ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧЕН—ÇУТĂ!)

Кaç çут ылтăн тăкать Багдадра—ун çинчен
юрламастăп.
Кĕрен роза пахчи тĕлĕрет – ун çинчен
юрламастăп.
Арабла тĕшмĕшсем, шăпчăксем, сар хĕрсем—
йăлăхтарчĕç!
Халăхсен Пахчине эп, Варшава поэчĕ, мухтатăп!
Шахразада—тем мар. Пин те иккĕмĕш каç шуçăмланчĕ.
Эп çавна, тĕттĕме сирекен çав çутта, халь мухтатăп.
Çеçенхир Гомерне, сĕм вăрманăн Вергилине эпĕ,
Урал-ту тӳпине çĕн Аляска юрри çитнине халь
мухтатăп.
Эй, вĕреннĕ çынсем! Тĕнчере Дантесем çеç пулман-мĕн:
Эп сире Руставелие те тĕпчемешкĕн сунатăп.
Рим е грек çыннине кăна мар—узбека сăнасамăр,
Эп сире Навои хăватне тĕпчемешкĕн сунатăп!
Муза! Ватă лезгин Сулейман кĕввипе юрласамччĕ!
Бурятсен, казахсен, пушкăртсен чĕлхине эп мухтатăп!
Халь Афинăра мар—Уфарах кĕнекеçĕсем йышлă,

Кулебай рудникне паян кун юррăмпа эп мухтатăп.
Юртăра çуралса инженер пулнă çын, коми—тухтăр,
Сакльăри радио е вĕреннĕ удмурт—çавсене эп
мухтатăп!
Ĕмĕрхи пушхирсем çамрăк йывăçсемпе ешĕлленчĕç,
Чукчасен ачисем хут пĕлеççĕ—çавна эп мухтатăп!
Тунгуссем, эвенксем Толстоя вуласа киленеççĕ,
Тутарсемшĕн Мицкевич сăвви халь—тăван,—
савăнатăп!
Камчадал йăхĕ те Эдиссон йышши çын çитĕнтерĕ,
Чăвашран, марирен Ньютонсем тухасса эп шанатăп!
Ĕнерхи куçкăн йăхлă туркмен—вĕренет астрономи,
Якут хĕрĕ—Мускав химикĕ, çавсене эп мухтатăп.
Савнă çĕнĕ туссем! Мĕнле сарăлчĕ пирĕн тĕнчемĕр!
Эпĕ, Лоизь ывăлĕ, сирĕнпе халь пуплетĕп, юрлатăп.
Ыр тăванăм, Вургунăм Самед, салам пултăр!
Бакупа юнашар çитĕнен колхоза эп мухтатăп!
Эй, Мирзо, таджиксен сăвăçи, Турсун тусăм!
Вроцлавра эс вуланă сăвва юратса эп мухтатăп.
Грузинсен пархатарлă поэчĕ Симон Чиковани!
Туслăх чапĕ Кахети эрехĕ пек сиплĕ—мухтатăп!
Тăвансем, тĕнчене ирĕке кăларасшăн çунатăр,
Çав таса, аслă ĕçшĕн сире юррăмпа эп мухтатăп.
Революцийĕн ывăлĕ-хĕрĕ! Умри çут хĕвелшĕн
Икĕ аслă çулпуçăмăра юратса эп мухтатăп.
Халăхсен туслăхне ман сăмахăм тупа пулса кĕтĕр,
Пур тĕнче шуçăмĕ ялтракан çĕршыва эп мухтатăп!

1950